**Чăваш тĕрри**

*Николай Карлин кĕвви*

Тĕррине эрешлет çутă шуçăм,
Сар хĕвел ыталать таврана.
Тĕрĕсен çырăвне, савнă тусăм,
Вуласа кăтартсамччĕ мана.

Чăваш хĕрĕ - ылтăн çĕрĕ,
Ылтăн çĕрĕ - асамат,
Чăваш хĕрĕ тунă тĕрĕ
Чĕрене хушать çунат.

Шăпчăксем çепĕç юрă хываççĕ,
Пин çăлкуç шăратать çав юрра.
Çеçкери çуркунне вăй-хăвачĕн
Юрату хĕмленет-çке чунра.

Пир çинче - ырă кăмăл ахахĕ,
Çӳл тӳпе кӳрекен пархатар,
Чун савни, пирĕн пурнăç сукмакĕ
Тĕрĕри пек выртать юнашар.

*Сементер, Ю. Чăваш тĕрри: «Тĕррине эрешлет çутă шуçăм…» : [юрă] / Юрий Сементер сăвви; Николай Карлин кĕвви // Сементер Ю. Чăваш пики : юрăсем. – Шупашкар, 2002. – С. 71.*